Пирĕн интервью

# «Росгосстрах» – шанчăклă компани

***Ӳкессе пĕлнĕ пулсан пурте тӳшек сарăттăмăрччĕ, анчах та пурнăçра мĕн сиксе тухассине пĕлместпĕр çав. Вăрă-хурахĕсем те çук мар, пушарсем те никама та хĕрхенмеççĕ. Хĕллехи кунсенчех акă пирĕн районта та юлашки вăхăтра уйрăм çынсен мунчисенче сахал мар пушар тухрĕ. Пурлăха вăрланă тĕслĕхсем те чылай. Мунчасене страхлакансем вара сахалтарах иккен.***

***«Ытларах пурăнмалли çуртсене страхлаççĕ те, мунчисем пирки манса каяççĕ. Мунчасем вара инкек-синкекпе пĕрле тăкакне те сахал мар кӳреççĕ», – çапларах пĕлтерет районта пулса иртнĕ тĕслĕхсене тишкерсе «Росгосстрах – Поволжье» компанин Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи Валерий Иванович ВЯЗОВ.***

**– Паянхи кун тĕлне те пурăнмалли çурт-йĕрпе хушма хуралтăсене тата хваттерсемпе пӳлĕмсене страхламаннисем çук мар пулĕ-ха. Сирĕн компани вара хĕллехи вăхăтра ятарлă акци irттернине илтнĕччĕ. Çакăн пирки каласа парайăр-ши?**

– Чăнах та, кашни çулах декабрь–март уйăхĕсенче «Росгосстрах» компани «Çурт-йĕре хĕлле страхламалли тапхăр» акци ирттерет. Ăна пирĕн клиентсем те хапăлласах йышăннине калама пултаратăп. Çултан çулах çак акци вăхăтĕнче клиентсемпе тунă килĕшӳсем хушăнсах пыраççĕ. «Росгосстрах – Кил «Актив», «Классика», «Престиж» страховани енĕсем анлă сарăлчĕç. Юлашки çулсенче çынсем пурăнмалли çурт-йĕрти пурлăха та тĕпрен улăштарма тăрăшни сисĕнет, çапла вара ăна та тĕрĕс-тĕкел упрасси çинчен шутлаççĕ – страхлаççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшĕччен пурăнмалли çуртсене, кил хуçалăхĕнчи ытти хушма хуралтăсене, дача çурчĕсене, коттеджсене страхласси 10 процент чухлĕ йӳнĕрех.

**– Страховани ĕçĕн мĕн йышши енĕсемпе ĕçлет-ха «Росгосстрах» компани?**

– Клиентсене услугăсемпе тивĕçтересси питĕ анлă. Мĕншĕн тесен пирĕн тĕп тĕллев – темĕнле инкек-синкек пулчĕ пулсан та, çынсене унчченхи пурнăç шайне малалла та тытса пыма пулăшасси. Çавăнпа та пирĕн услугăсем хушшинче çӳлерех асăннă çурт-йĕрпе килти пурлăха страхласси кăна мар, техника хатĕрĕсене те, çынсене хăйсене те, выльăха страхласси те. Пирĕн агентсем кашни клиентпах уйрăммăн ĕçлеççĕ: страхлас ĕçре те, инкек пулсан выррăна тухса тишкерессипе те.

**– Эпĕ тата «Росгосстрах» компани иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче яланхи клиентсем пулнă çынсене компенсаципе тивĕçтернине те илтнĕччĕ. Ку çĕнĕлĕх е компанин ырă йăли çапла?**

– Иртнĕ ĕмĕрĕн 70–80-мĕш çулĕсенче пирĕн 14994 клиент (ку ятарлă журналти список тăрăх) хăйсене, ачисене нумай çуллăха (мăшăрланнă тĕле, 18 çул тултарнă тĕле) страхланă. Анчах та çав вăхăтра патшалăх çак укçана тӳлеймен. Ритуаллă услугăсене те тӳлетпĕр, страхлакан çын вилнĕ пулсан та, 6000 тенкĕ таран компенсаци тухать. Çапла вара 1992 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен пирĕн компанипе страхласси çинчен килĕшӳ тунă çынсен халĕ компенсаци илме май пур.

**– «Росгосстрах» кăçал 88 çул тултарчĕ ĕнтĕ. Паян вăл – çĕршыври тăнăç аталанса пыракан страхлакан компанисенчен пĕри. Анчах та çак вăхăтрах хăшĕ-пĕрисем эсир ертсе пыракан уйрăм та, компани пĕтĕмĕшле пĕтет тенине те илтме тӳр килчĕ. Ку пĕрре те чăнлăхпа çыхăнман сас-хура пулĕ тесе шутлатăп.**

– Эсир тĕрĕсех шутлатăр. «Росгосстрах» 88 çул ытла ĕçлесе пысăк авторитет çĕнсе илме пултарчĕ ĕнтĕ. Вăл ĕнер те пулнă, паян та ура çинче çирĕп тăракан компани шутланать, ыран та пулать. Мĕншĕн тесен тĕнчери экономика кризисĕн тапхăрĕнче страхлакан пĕчĕк компанисем сахал мар пĕтрĕç. Юлашки 5 çул хушшинче Раççей Федерацийĕнче 840 пĕчĕк компани пĕтрĕ. Кăçал – тепĕр 70-шĕ. Чăваш Республикинче çакнашкал 17 компани пĕтсе ларчĕ. Вĕсен клиенчĕсем вара эпир мĕнле ĕçленине курса «Росгосстрах» компание шанаççĕ.

Пирĕн уйрăмăн паянхи кун тĕлне 18 пине яхăн клиент. Кăçал страховани килĕшĕвĕсен шучĕ пĕтĕмĕшле пĕлтĕрхинчен 15 процент чухлĕ пысăкрах пулчĕ. Сăмахран, кăçалхи 11 уйăхра машинăсене обязательнăй йĕркепе страхласси пĕлтĕрхи çулăн 186 процентчĕпе танлашрĕ, транспорта хăй ирĕкĕпе страхласси – 145 процентпа. Çынсем çурт-йĕрпе пурлăха (пурăнмалли çуртсем, хваттерсем тата унти пурлăх та кĕрет) страхлассi те 12 процент чухлĕ ӳсрĕ. Выльăх-чĕрлĕхсĕр пурăнмасть ял çынни, ăна та страхлать. Ку кăтарту 105 процентпа танлашрĕ ĕнтĕ. Пĕлтĕр пирĕн компани çынсен пĕтĕмĕшле 3 миллиард та 606 миллион тенкĕлĕх хакланă çурт-йĕрĕшĕн, пурлăхĕшĕн, çынсемшĕн тата ыттишĕн те ответлă пулса тăчĕ. 2009 çул пĕтмен-ха, эпир вара хальлĕхе хамăр çине 3 миллиард та 996 миллион тенкĕлĕх яваплăх «илме пултартăмăр». Страхланă взноссен калăпăшĕ кăçал 24,5 миллион тенкĕпе танлашса пырать. Пĕлтĕр çак кăтарту 19 миллион тенкĕ чухлĕ пулнă. Юлашки 5 çул хушшинче çак кăтарту икĕ хут ӳсрĕ. Кăçалхи 11 уйăхра тĕрлĕ страхлакан килĕшӳсем тăрăх çынсене пурĕ 8 миллион тенкĕ ытла укçа тӳлерĕмĕр.

Çапла вара, хăвăрах куратăр, çакăн пек вăйлă компани пĕтме те пултараймасть. «Росгосстрах» çине нимĕнле кризис та витĕм кӳмерĕ. Эпир малаллах аталанатпăр.

Пирĕн яланхи клиентсене тата Муркаш районĕнчи мĕн пур çынна çитес Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе саламласа пурнăçра «Росгосстрах» тивĕçтерекен шанчăклăхпа усă курма сĕнетĕп. Пурнăçра телейпе тăнăçлăх, ырлăх-сывлăх сунатăп.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ыйтăм

# Хаçатра мĕн çинчен вуласа пĕлесшĕн?

***Çак ыйтăва хускатрăмăр эпир паян. Мĕнле темăсем кăсăклантараççĕ-ха пирĕн вулакансене? Малашне мĕн çинчен ытларах вуласа пĕлесшĕн вĕсем? Хаçат страницисенче камсене курасшăн?***

**Инна, çамрăк специалист:**

– Мана ытларах çамрăксен тематики интереслентерет: вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, кану вăхăчĕ те. Юридици ыйтăвĕсене çутатнине курас килет район хаçатĕнче. Кулленхи пурнăçра питĕ нумай ыйту тухса тăрать-çке.

**Надежда, культура ĕçченĕ:**

– Мана икĕ уйăх каялла тухма пуçланă «Çемье» страница килĕшет. Малашне те ăна кăларасса шанатăп. Уйрăмах ачана воспитани парассипе сĕнӳсем илесшĕн эпĕ район хаçачĕ урлă. Тĕрлĕ специалистсен (психологсем, наркологсем, медицина ĕçченĕсем) усăллă канашĕсем интереслĕ пулĕç тесе шутлатăп. Ялти çынсен культурăллă пурнăçне анлăрах çутатасса та шанатăп.

**Тамара, тивĕçлĕ канура:**

– Çитес çул суйлавсем çывхараççĕ. Çавна май «Çĕнтерӳ ялавĕн» страницисенче пур парти пурнăçне те çутатса парсан аван пулмалла, халăхăн пурин çинчен те пĕлмелле вĕт-ха.

**Валерий, 50 çултан иртнĕ:**

– Манăн хамăр тăрăхри пултаруллă çынсем çинчен вуласа пĕлес килет. Сăмахран, тĕрлĕ япаласем шутласа кăларакансем çинчен, килти хуçалăхра е ытти çĕрте хăйсем ăсталанă япаласемпе усă куркансем çинчен. Çакă пуриншĕн те интереслĕ пуласса шанатăп.

**Нина, тивĕçлĕ канура:**

– Эпĕ православи тĕнĕпе çыхăннă уявсене манмалла мар тесе каласшăн. Вĕсем çинчен аса илтерсех тăмалла вулакансене. Православи тĕнĕпе килĕшӳллĕн тĕрлĕ йăла-йĕркесене халĕ тĕрĕс туса пырасси çинчен сăмах хускатсан та аван пулĕччĕ.

**Любовь, пĕчĕк ача амăшĕ:**

– Хаçатра тĕрлĕ хыпарсемсĕр пуçне кăштах кулăш пирки те аса илсех тăмалла. Шӳтлĕ калавсем те пире интереслĕ пулĕç. Тен тĕрлĕ конкурссене те хутшăнма кăмăл тăвĕç ман пек килте ача пăхса ларакан хĕрарăмсем. Тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме вĕрентсен те лайăх. Хаçатри «Çемье» страницăна килĕштерсе вулатăп.

***Мĕнех, вулакансен сĕнĕвĕсене йышăнатпăр. Малашне те вĕсем район хаçачĕпе пĕрле пулса ăна интереслĕрех тăвас ĕçре активлăх кăтартасса шанатпăр.***

***Çак ыйтупа сĕнӳсем пур пулсан вара 62-1-38 номерпе шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Уяв çывхарать

# Çĕнĕ çулта савăнар

Декабрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 10-мĕшĕччене x районта Çĕнĕ çула халалланă мероприятисем иртеççĕ. Ĕç коллективĕсен çак уява паллă тунипе пĕрлех хăйсем ĕçлекен çурта Çĕнĕ çул сăн-сăпатне кĕртмелли çинчен манмалла мар. Мĕншĕн тесен районта ятарлă конкурс пуçланнă ĕнтĕ.

Çĕнĕ çул ачасемшĕн пылак парнесемпе, Хĕл Мучипе Юр пике килнипе паллă. Çавăнпа та район шайĕнче пур вĕрентӳ учрежденийĕсенче те уяв мероприятийĕсем палăртса хунă кунсенче иртĕç. Район пуçлăхĕ инвалид ачасене тата тăлăх ачасене уява **декабрĕн 28-мĕшĕнче** йыхравласа саламлĕ. Юр пикесемпе Хĕл Мучисен конкурс-фестивалĕ вара **декабрĕн 25-мĕшĕнче** пулать. Çак кунах район çамрăкĕсем хăйсен форумне пухăнĕç. Çамрăксен çулталăкне пĕтĕмлетсе чаплă лару-тăрура хупĕç.

Спорт ăмăртăвĕсемпе те канмалли кунсем пуян пулĕç. **Январĕн 5-мĕшĕнче** ФСК-ра шывра ишессипе «Атте, анне тата эпĕ – спорт çемйи» ăмăрту иртет. Хоккей вăййине курма Муркашри пăр çине январĕн 6–7-мĕшĕсенче чĕнетпĕр. Тепĕр икĕ кунĕнче шашкăпа шахмат вăййисем иртĕç. Районти çамрăксен парламенчĕн кубокне çĕнсе илессишĕн хĕрсем волейболла **январĕн 8-мĕшĕнче** выляççĕ.

Культура пурнăçĕ те канмалли кунсенче интереслĕ мероприятисемпе çыхăннă. Библиотекăсенче, Культура çурчĕсемпе клубсенче уяв каçĕсем ирттерме хатĕрленеççĕ ĕнтĕ. Муркашри искусство шкулĕ Çĕнĕ çул уявне **декабрĕн 30-мĕшĕнче** кĕтет, тепĕр кунне вара ФСК умĕнче ача-пăчана савăнма чăн-чăн уяв пулĕ. Сурхури уявне те интереслĕ паллă тума манмăпăр.

Ватă çынсемпе инвалидсем пурăнакан çуртсенче те Çĕнĕ çул ячĕпе уявсем ирттерме палăртнă. Районти ветерансен канашĕпе старейшинăсен канашĕн членĕсем те **декабрĕн 30-мĕшĕнче** район пуçлăхĕпе тĕл пулĕç.

**Декабрĕн 31-мĕшĕнче** вара Муркашра «Çĕнĕ çулхи каç» ятпа иртекен культура мероприятийĕсем пурне те урама тухма чĕнĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Сĕтел çи теннисла выляма

Декабрĕн 24-25-мĕшĕсенче Çатракассинчи вăтам шкулта сĕтел çи теннисĕпе ăмăрту иртет. Малтанхи кунне пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тулли мар вăтам шкулсенче, иккĕмĕш кунне вăтам шкулсенче вĕренекенсем ăмăртаççĕ. Ăмăртусем 9 сехетре пуçланаççĕ.

Ал ĕç ăстисем

# Музейра кружок ĕçлет




***Чăваш хĕрарăмĕсем мĕн авалтан ал ĕç ăстисем пулнă. Паян акă пирĕн тĕрĕсене пăхса пĕтĕм тĕнче тĕлĕнет.***

***Çак пуянлăха çухатас мар тесен, тĕрлес ăсталăха çамрăксене хăнăхтармалла. Районти историпе краеведени музейĕнче «Ал ĕç ăсти» кружок ĕçлет. Кунта Муркаш шкулĕнчи 5 – 8-мĕш классенче вĕренекен хĕр ачасем хĕреçле тата шăрçапа тĕрлеме вĕренеççĕ. Хальлĕхе вĕсем (сăн ӳкерчĕкре) малтанхи утăмсем çеç тăваççĕ-ха. Пурăна киле чăн-чăн ăстасем пулса тăрĕç.***

***Кружока тĕрлес ăсталăха алла илес текенсене пурне те йышăнаççĕ.***

Çамрăксен çулталăкĕнче

# Республикăра малтисен ретĕнче




Республикăри çамрăк журналистсен тата массăллă информаци хатĕрĕсен «Çамрăксен сăмахĕ тата ĕçĕ» конкурса иртнĕ эрнере пĕтĕмлетрĕç. Ĕçсене тĕрлĕ номинаципе хакларĕç.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче тухса тăракан «Школьная пора» хаçат «Чи лайăх шкул хаçачĕ» номинацире иккĕмĕш вырăн йышăнма пултарчĕ.

Хаçат шкулта 2007 çултанпа А4 форматпа тухса тăрать. Унăн ĕçне халĕ акăлчан чĕлхи учителĕ Галина Валентиновна Кириллова ертсе пырать. Хаçатăн тĕп редакторĕ – 11 класра вĕренекен Татьяна Ермакова, унăн çумĕ – Екатерина Мосолова. Хаçата материалсем çырса тăракансем вара кашни класрах пур темелле. Вĕсем тĕрлĕ рубрикăсем тытса пыраççĕ: учительсем çинчен те, вĕренекенсем çинчен те тăтăшах интереслĕ репортажсемпе заметкăсем пичетлеççĕ. Тĕп редактор та кашни номертех хăйĕн шухăшĕсемпе паллаштарать. Хаçат вырăсла тухса тăрать, анчах та унта чăвашла хатĕрленĕ страницăсем те пур: учительсем те, хăш-пĕр вĕренекенсем те чăвашла илемлĕ сăвăсемпе калавсем çырма пултараççĕ.

**Екатерина МОСОЛОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем хыççăн.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Анне

«Анне» сăмаха пуçласа эп илтетĕп
Ача çуралсан çак паха тĕнчене.
«Анне» сăмаха виличчен эп упратăп:
Тăрать çутатса вăл чĕре варринче.
Анне пилĕпе савăнса эс утатăн
Тăван çĕр-аннешĕн хастар çын пулса.
Вĕçен космоса, уй-хире те саватăн
Тĕнчери пур аннене те тав туса.
Анне куллипе ыйхăран вăранатăн
Ачашшăн тухса эс ăшă ыйхăран.
Инçе çула та ак тухатăн-каятăн,
Аннӳ килĕнчен йĕрсе-хурланса.
Хавас хыпарсем те илсе çитеретĕн
Ĕçрен, паянхи çитĕнӳ пур çинчен.
Çырса саламсем çырупа шăрçалатăн
Кашни уявра, çуралнă кун çитсен.
Тăван Чăваш Енĕм, хисеп эс тусамччĕ
Хастар аннесен лăш курман аллине.
Телейлĕ те мирлĕ кун-çул пиллесемччĕ
Чăн паттăр унăн ывăлĕ-хĕрĕсене.

**Т. МИХАЙЛОВА.**

Вaçкасси ялĕ.